26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАРТ
16
ЫТЛАРИКУН
59(6296) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Колхозсен производство планĕсене тумалла

Колхозсен 1943 çулхи производство планĕсене тата приходпа расход сметисене тăвасси пысăк ĕç. Кашни колхозăн çуракине тухиччен хăйĕн çулталăкри производство планне тата приходпа расход сметине туса çирĕплетмелле. Анчах та паянхи куна çитсе те хăшпĕр райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем, МТС политотделĕсемпе райçĕрĕç пайĕсем колхозсен производство планĕсене тăвас ĕçе организацилеме кирлĕ пек тытăнман.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райсовет исполкомĕсене, МТС политотделĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене колхозсен производство планĕсене тăвас ĕçе халех организацилеме хушрĕ. Çак ĕçе тума колхозсем çумне районри агрономсемпе зоотехниксене уйăрса çирĕплетмелле. Мартăн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр республикăри кашни колхозрах 1943 çулта тумалли ĕçсен планĕсене туса çитермелле, апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр вăл плансене райсовет исполкомĕсен пăхса тухса çирĕплетсе памалла.

Производствăллă плансене колхоз правленийĕсем тăваççĕ. Плана тунă çĕре опытлă колхозниксене хутшăнтармалла тата унта обязательнăй йĕркепе агрономсемпе зоотехниксем пулмалла. Колхоз правленийĕнче тунă 1943 çулти производство планне райçĕрĕç пайĕ пăхса тухнă хыççăн, колхозниксен пухăвĕнче çирĕплетмелле. Çакăн хыççăн плана райсовет исполкомĕн ларăвĕнче çирĕплеттермелле. Производство планне тунă чухне колхоза государство панă заданисене пурнăçа кĕртессине тĕп вырăна хумалла. Тырпула нумайрах туса илмелли майсене тата ĕç вăйне тĕплĕн шута илмелле.

Пĕр куна та кая хăвармасăр тумалли ĕçсенчен пĕри вăл — ăçта мĕн акмаллине палăртса хурасси пулать. Çакă питех те кирлĕ ĕçпе иртнĕ çул чылай колхозсем тĕплĕн интересленмерĕç. Уйра хăш тĕле мĕнле культура акассине çуракине тухсан çеç палăртрĕç. Çапла вĕсем тырăсене хăш культура, мĕнле тырă хыççăн, ăçта аксан лайăхрах пулассине шута илмесĕрех акрĕç. Çакăн пек туни вăл тырпулăн тухăçлăхне чакарни пулать. Çавăнпа та кăçал производство планĕсене тунă чухне агрономсем кăтартнă тăрăх кашни культурăна хăш тĕле акмаллине тĕплĕн палăртма кирлĕ.

Колхоз ĕçне планлассинче халь кая хăвармасăр тумалли тепĕр ĕç вăл — агротехника мероприятийĕсен планне тĕплĕн палăртса хурасси. Хăш уя, мĕнле культура акас вырăна, мĕн чухлĕ тата мĕнле удобрени хумаллине палăртмалла. Çавăн пекех вăрлăхсем енĕпе те планласа расчетсем тумалла.

Ĕç нормине, колхозниксен ĕçне ĕçкунĕсемпе хаклассине пăхса тухмалла, вĕсене колхозниксен пухăвĕнче çирĕплетмелле. Кашни бригадăна, уйрăм культурăсемпе ĕçлекен звеносене ĕç нормисене тата ĕçĕн хакне кăтартса парас пулать.

Çакăнпа пĕрлех халь ĕçлекен бригадăсене çирĕплетес пулать, звеносене çынсем уйăрса парса уйрăм участоксем çумне уйăрса çирĕплетмелле. Хăйсем килĕшнипе уйрăм колхозниксене кок-сагыз, махорка, сахăр кăшманĕ çитĕнтерсе пама участоксем уйăрса пама юрать. Çавăн пек уйрăмăн ĕçлеме килĕшекен кашни колхознике çур гектартан пуçласа пĕр гектара çити е кок-сагыз, е сахăр кăшманĕ, е махорка лартса тума уйăрса парас пулать.

Колхозсене производство планĕсем тума çĕрĕç органĕсемпе МТС политотделĕсем енчен куллен пулăшса тăни кирлĕ. МТС политотделĕсемпе çĕрĕç пайĕсем кашни колхозăн планне пăхса тухмалла. Кашни планра агрономпа зоотехник ертсе пыни курăнмалла. Ку енĕпе Советски райçĕрĕç пайĕ лайăх ĕç пуçласа янă. Райçĕрĕç пайĕ, ВКП(б) райкомĕ ертсе пынипе, производство планĕсем тăвас ыйтупа колхоз председателĕсемпе инструкциллĕ канашлу туса иртерчĕ. Ĕнер районра счетоводсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Районри чылай колхозсем производство планĕсене тунă та ĕнтĕ.

Колхозсен 1943 çулхи производство планĕсене халех тума тытăнар. Кашни колхоз çуракине çулталăкри производство планне туса çирĕплетнипе тухмалла тăвар.

Тракторсене кĕркуннепе хĕл ле юсамалли плана срокчен тултарнăшăн, Чăваш АССР Нарком земĕпе Политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракан çен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

1. Елчĕк МТС-ĕ (директор ĕ А. П. Яшин, политотдел начальникĕ Г. Ф. Михеев, старши меха ник В. П. Павлов).

2. Элĕк МТС-ĕ (директорĕ И. В. Яхваров, политотдел начальникĕ Ф. Н. Макаров, старши механик Майоров).

3. Етĕрне МТС-ĕ (директо рĕ Н. А. Щетинкин, политотдел начальникĕ П. П. Перлович, стар ши механик П. Н. Смородинов).

4. Вăрмар МТС-ĕнчи хĕрар ăмсен пĕрремĕш трактор бригади (бригадирĕ Чернов юлташ).

5. Вăрмар МТС-ĕнчи хĕрар ăмсен иккĕмĕш трактор бригади (бригадирĕ Ванюков юлташ).

6. Дарья Васильевна Илюшкина юлташ — Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи трактористка.

Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. ОРЛОВ юлташ мухтавлă колхозник-патриотпа тĕлпулни

Юрпа витĕннĕ тӳрем те тикĕс çĕр çурхи хĕвел айĕнче çуталса выртать. Çуталакан юр куçа йăмăхтарать. Пусăрăнса пыракан хуралнă çулпа тимĕр-кăвак рысак юртать. Çуна тупанĕсем çăмăллăн шăхăрса пыраççĕ. Çул «Красный луч» колхоз еннелле туртăнать.

Кунта ĕнтĕ пĕтĕм ял пухăннă. Çынсем ялсовет тĕлĕнче, çул çинче тăраççĕ. Вĕсем кĕтеççĕ. Рысак çынсен хушшине çитсе чарăнчĕ. Çуна çинчен Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов çăмăллăн сиксе анчĕ. Савăнăçпа хумханнине пытараймасăр, герой патнелле Андрей Михайлович Сарсков утса пырать.

— Эпĕ сире тăван ывăла кĕтнĕ пекех кĕтрĕм,— тет Андрей Михайлович.

Вĕсем пĕр-пĕрне ыталаса илеççĕ те хĕрӳллĕн чуптăваççĕ.

Колхоз клубне халăх шăнăçаймасть. Сцена çинче — аслă Сталинăн портречĕ, лозунгсемпе ялавсем.

Малтанхи сăмаха «Красный луч» колхозăн председателĕ Плигуськин юлташ калать. Вăл хăйĕн колхозĕ мĕнле ĕçлени çинчен, колхозниксем фронта мĕнле пулăшса пыни çинчен, колхозри чи лайăх çынсем çинчен, герой валли боевой самолет илме хăйĕн мĕнпур перекетлесе хăварнă укçине панă Сарсков юлташ çинчен, колхоз çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен каласа парать.

Совет Союз Геройĕн капитан Ф. Н. Орловăн сăмахне колхозниксем пурте шăп пулса итлеççĕ.

— Çак вăрçăра совет халăхĕ умĕнче çапла ыйту тăрать: пирĕн е Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче ирĕклĕн пурăнмалла, е фашистсен атти айне лексе асапланмалла. Çак ыйтăва совет халăхĕ, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем ылханлă тăшмана хирĕç, хамăр çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕшĕн вăя хĕрхенмесĕр кĕрешеççĕ. Мĕншĕн эпĕ герой пултăм? Мĕншĕн тесен эпĕ — пĕтĕм чун-чĕрепе совет халăхĕн ывăлĕ, халăх интересĕсемшĕн тӳрĕ кăмăлпа çапăçатăп.

Федот Никитич хăйĕн çапăçури пурнăçĕнчи эпизодсене каласа парать, колхозниксене социализмлă уйхирте татах та хастарлăнрах ĕçлеме чĕнет.

— Сирĕн çитĕнӳсем мана тата манăн экипажа çапăçура паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума хавхалантарчăр! Эпир Сарсков юлташ пек çынсемпе мухтанатпăр. Вăл патриотла пысăк ĕç пуçарчĕ. Пурте Сарсков пек пулăр! —тет юлашкинчен Орлов юлташ.

— Паян манăн савăнăçлă кун, — терĕ Сарсков юлташ. — Эпĕ хамăрăн землякпа Совет Союзĕн Геройĕпе Орлов юлташпа, хам тăван ывăлпа тĕл пулнă пек, тĕл пултăм. Герой валли самолет тума эпĕ çĕр пин тенкĕ укçа патăм. Орлов юлташа шантарса çапла каласшăн: хам вăй çитнĕ таран фронта малашне те хастарлăн пулăшса тăрăп.

Андрей Михайлович хăйĕн сăмахне вĕçлеймерĕ. Унăн ватлăхпа пĕркеленнĕ пичĕ тăрăх савăнăçпа хумхану куççулĕ юхса анчĕ.

Пухура çавăн пекех ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Горбунов, Иванькоăри всевобуч пункчĕн представителĕ Дановский, Сталин ячĕпе тăракан тата «Путь Ильича» колхозсен председателĕсем Новиковпа Яблонский юлташсем тухса калаçрĕç. Вĕсем фронтшăн татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме, Хĕрлĕ Çар боецĕсене пур енĕпе те пулăшса пыма сăмах пачĕç.

Колхозниксен пухăвĕ кăçалхи çуракине большевикла ирттерес тесе тата тăван çĕршывпа фронта тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç, промышленность валли — чĕртавар татах та ытларах парас тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме йышăнчĕ.

Пуху хыççăн Андрей Михайлович Сарсков чăваш халăхĕн паттăр ывăлне чаплăн хăналарĕ.

Ĕнер Федот Никитич Орлов республикăран тухса кайрĕ. Хăй кайнă чухне республикăри ĕççыннисене хăйне ырă кăмăлпа кĕтсе илсе хăналанăшăн тав туса çыру хăварчĕ.

ТĂВАН ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ĔÇÇЫННИСЕНЕ

Чĕререн ăшă кăмăлпа кĕтсе илсе йышăннăшăн тăван чăваш халăхне тав тăватăп. Хамăрăн юратнă тăван çĕршывшăн, хамăрăн аслă Сталиншăн, ылханлă тăшмана хирĕç малашне те юлашки сывлăш тухиччен çапăçма тупа тăватăп.

Республикăри рабочисемпе колхозниксене, мĕнпур ĕççыннисене фронта пулăшассишĕн, тăшмана аркатса тăкассишĕн татах та хастаррăнрах ĕçлеме чĕнетĕп.

Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. Н. ОРЛОВ.

Ĕнесене юратса, лайăх пăхса усратпăр

Пирĕн Советски районĕнчи Анат-Ачакри «Новый быт» колхоз 1943 çулта фронтпа тăван çĕршыва тата нумайрах тырпул, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса парассишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Колхоз кăçал кашни гектартан çĕр пăт тырă туса илессишĕн кĕрешет. Фермăсенче ĕçлекенсем те выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне малалла ӳстерсе пырассишĕн кĕрешĕве тухрĕç. Иртнĕ çулталăк хушшинче пирĕн колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн хисепне нумай ӳстерчĕ. Пирĕн фермăсенче халĕ 71 ĕне, 70 сысна, 112 сурăх. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана эпир ирттерсе тултартăмăр. Государствăна 1943 çулшăн аш-какай парса татрăмăр, çу памалли плана 75 процент тултартăмăр.

1942 çулта эпир 18 ĕне сĕтĕнчен пĕр тонна çу туса илтĕмĕр. Нормăпа пăхнă тăрăх 25 литр сĕтрен пĕр килограмм çу тухмалла пулсан, пирĕн кашни 16 литр сĕтрен пĕрер килограмм çу тухрĕ. Сĕт пахалăхĕ ĕнесене лайăх пăхнинчен, вĕсене лайăх тăрантарнинчен килет. Эпир кашни выльăха ачашшăн пăхса усратпăр: тутă тытатпăр, тасататпăр, витесене те тасатса çуса тăратпăр. Çавăнпа пирĕн выльăхсем таса та мăнтăр, тухăçлăхĕ те пысăк.

Эпĕ фермăсен заведующине ĕçлеме кĕнĕренпе çулталăк çурă çитрĕ ĕнтĕ. Çак вăхăт хушшинче фермăсенче пĕр пуç выльăх та вилмен. Кашни çамрăк выльăха эпир лайăх пăхса ӳстерне. Малашне те фронтра тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçакан тантăш-юлташсене тивĕçлĕ ĕçлесе пырăпăр. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малти вырăнта пулăпăр.

Л. Иванова.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 14-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 14-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

Иртнĕ эрнере, мартăн 7-мĕшĕпе 13-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата тăшманăн аэродромĕсем çинче нимĕçсен 200 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 110 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 13-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем тиенĕ 100 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерипе минометсен 10 батарейине пусарнă, боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Вязьмăран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă. Холм-Жирковский районĕнче нимĕçсем пехотăн пысăк вăйне тата артиллерин 20 батарейи таран илсе пырса тăратнă. Совет чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине сирсе пăрахса Днепр шывĕ урлă каçнă та Днепрăн хĕвеланăç çыранĕнче гитлеровецсене тĕреклĕтнĕ темиçе пунктран сирпĕтсе кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер вилли выртса юлнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Советсен ытти чаçĕсем сарлака фронтра Вязьма шывĕ урлă каçнă. Вязьма хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем çапăçса пырса малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе вуншар пункта йышăнса илнĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан 30 пункта йышăнса илнĕ. Пирĕн подразделенисем йышăнса илнĕ халăх пурăнакан пĕр пунктăн урамĕсенче тăшманăн 300 вилли ытла выртса юлнă. 6 оруди, танксене хирĕç перекен 7 пăшал, йышлă пулеметсемпе винтовкăсем, боеприпассен складне тата тĕрлĕ çар пурлăхĕн складне тытса илнĕ.

* * *

Харьков районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Пирĕн артиллерипе бронебойщиксем темиçе вуншар танк тата тăшман пехоти ларса пыракан 60 автомашинăна ытла пĕтерсе тăкнă. Харьковран çурçĕртерехре пирĕн чаçсем тăшманăн пехотине тата танкĕсене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Нимĕçсене пысăк сиен кӳнĕ.

* * *

Изюм районĕнче Н-ски соединенин боецĕсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 16 танкне тата 2 бронемашинине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата гитлеровецсен пĕр батальонне яхăн пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тăшман 11 танк тата автоматчиксен пысăк группине атакăна янă. Паршак юлташ ертсе пыракан зенитнăй батарейăн артиллерисчĕсем пеме пуçланă. 5 танк çухатнă хыççăн нимĕçсем васкаса каялла чакнă.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ çак кунсенче чугунçул çинчи пысăк кĕпере сирпĕтсе янă. Фронта каякан çав паха çул тăрăх вара поездсем çӳреме чарăннă. Кĕпере сирпĕтсе янă чухне нимĕçсен 140 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Орел партизанĕсен тепĕр отрячĕ тăшманăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Паровоз тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем ларса пыракан 6 вагон арканса кайнă.

* * *

Нимĕçсен 320-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 585-мĕш полкăн штабной ротинчен хăй ирĕкĕпе тыткăна парăннă салтак Генрих П. çапла каласа панă: «Пирĕн полк Францире тăратчĕ. Вăл Шербуртан кăнтăртарахра 40—50 километр сарлакăш оборона линине йышăнса тăратчĕ. Вăл участокри тĕреклетчĕ вырăнсенче йĕплĕ пăралук карса тухнă дзотсем пур, вĕсем пĕр-пĕринчен ик-виç километрта тăраççĕ. Дзотăн кашни гарнизонĕнче вăтăршар çын тата иккĕшер станковăй пулемет пурччĕ. Дзотсем хушшинчи çырана патрульсем кăна сыхлатчĕç. Халĕ, Францирен нимĕç дивизийĕсене нумайĕшне Хĕвелтухăç фронтне янă хыççăн, Францире юлнă чаçсем шултăра десантсене хирĕç кĕрешме вăй çитерес çук».

* * *

Мартăн 13-мĕшĕнче Берлинри радио çапла пĕлтерчĕ: «Вязьмăран чакса кайнă вăхăтра Германи войскисем хуларан историллĕ пуянлăхсене пĕтĕмпех илсе тухса кайнă». Берлинри радион çак пĕлтерĕвĕнче чăнлăх акă мĕнре: Хĕрлĕ Çар пырапыра çапнипе каялла чакакан гитлеровецсем Вязьмăна пĕтĕмпех çаратса пĕтеркĕ. Анчах вăрă нихăçан та чăннине каламасть. Тĕрĕссипе илсен, фашистла бандитсем историллĕ пуянлăх япалисене кăна вăрламан. Хулари общество тата культура учрежденийĕсен харпăрлăхне вăрлани çинчен тата вырăнти мирлĕ халăхăн хваттерĕсене пĕтĕмпех тасатса тухса кайни çинчен вĕсем шарламаççĕ.

Мартăн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 15-мĕшĕ ыран тĕнĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Вязьмăран хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан темиçе вуншар пункта, вăл шутра Семлево ятлă район центрĕпе чугунçул станцине йышăнса илнĕ. Пĕр чаçăн боецĕсем нимĕçсен пехотин икĕ ротине аркатса тăкнă. Тăшмантан полевой орудисен батарейине, 5 противотанковăй тупă, 12 пулемет, 9 миномет, снарядсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра, малтан хатĕрлесе хунă опорнăй пунктсем çине таянса, тăшман наступлени тăвакан пирĕн войскăсене тытса чарас тесе хаяррăн кĕрешет. Пĕр чаçăн боецĕсем нимĕçсен тĕреклетнĕ тăрăхне татнă та малалла кайса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче гитлеровецсен 900 салтакĕпе офицерĕнчен кая мар вĕлернĕ. Пирĕн подразделенисем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 10 оруди, 22 пулемет, 5 миномет, 39 автомашина тата ытти те.

* * *

Харьков районĕнче пирĕн войскăсем тăшманăн танкĕсемпе мотопехотин йышлă вăйĕсене хирĕç хаяррăн çапăçнă. Пĕр чаçăн боецĕсем кун каçа тата çĕрĕпе гитлеровецсен пĕр чарăнмасăр тăвакан атакисене сирсе тăнă. Противотанковăй орудисемпе пăшалсенчен персе, хăй тĕллĕн çӳрекен 6 туппа персе çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен 14 танкне пĕтерсе тăкнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе тата штык вĕççĕн çапăçса, нимĕçсен 600 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн подразделенисем тепĕр участокра хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшмана пысăк сиен кӳрсе оборонăн çĕнĕ рубежне чакнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем тăшман çине артиллерипен тата минометсенчен персе тăнă. Пирĕн артиллеристсен тата минометчиксен вучĕпе пĕр танк, 10 автомашина, чугунçул составне тата нимĕçсен пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçри разведчиксен группи лейтенант Пархоменко командир пулса ертсе пынипе çĕрле сасартăк тăшманăн окопĕсене атакăланă. Батальон ялавне, 2 миномет тата 5 пулемет пăрахса хăварса, нимĕçсем тарнă.

* * *

Чернигов облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕç автомашинисене юсакан мастерскоя тапăннă. Партизансем тулти хурала хăвăрт катертнĕ те, мастерской территорине кĕрсе кайса ăна вут тивертнĕ. Мастерской тата унта пулнă автомашинăсем çунса кайнă. Икĕ кун иртсен çав отрядри партизансемех 4 чугунçул кĕперне сирпĕтсе янă. Тепĕр отрядри партизансем нимĕçсен фронта каякан çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Паровоза тата 13 класнăй вагона аркатса тăкнă. Вагонсен çĕмрĕкĕсем айĕнче гитлеровецсем нумай вилнĕ.

* * *

Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Калинин облаçĕнчи ял çыннисем гитлерла бандитсен тискер ĕçĕсем çинчен каласа панă. Станы ялĕнче колхозниксен çурчĕсене нумайĕшне нимĕçсем витесем туса хунă. Гитлеровецсем пĕр кил хушшине 180 çынна—ватăсене, хĕрарăмсене тата ачасене хăваласа пухнă та вĕсене арестленисен шутĕнче тытса усранă. Темиçе уйăх хушшинче выçăпа аптăраса тата хĕненине пула 67 çын вилнĕ. Ситниково ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем каялла чакас умĕн Григорий Петров колхознике, унăн арăмне тата ытти çынсене те персе пăрахнă. Нумай çамрăксене бандитсем Германие каторгăна хăваласа илсе кайнă. Утма пултарайманнисене пурне те гитлеровецсем персе пăрахнă.

* * *

Югослави партизанĕсем Загребран хĕвеланăçнерехре Итали войскисен пысăк колоннине çавăрса илсе аркатса тăкнă. «Муссолини» батальонĕнче, вилнисене кăна шутласан та, 450 салтакпа офицер пĕтнĕ. Партизансем нумай трофейăсем тытса илнĕ. Горни акуф-Прозор секторĕнче 8 кун хушши пынă çапăçусем Югослави патриочĕсем çĕнтернипе вĕçленнĕ. Аркатса тăкнă нимĕç чаçĕсем нумай хĕçпăшал, боеприпассем тата тĕрлĕрен çар хатĕрĕсем пăрахса каялла чакаççĕ.

МАЙ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Районсенчи промкомбинатсенче

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Райпромкомбинат иртнĕ уйăхра производство планне 110 процент тултарчĕ. Комбинатри пур цехсем те плана пĕтĕмпех пурнăçларĕç. Çĕвĕ çĕлекен тата çăмата йăвалакан мастерскойсем планран ирттерсе 25 процент чухлĕ продукци туса кăларнă.

Çак çитĕнĕве рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртăва тĕрĕс организациленипе тунă. Комбинатăн пур цехĕсем те пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ, ĕç результачĕсене кăтарту хăмисем çине çырса пыраççĕ. Уйрăм рабочисемпе бригадăсем тата сменăсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене епле пурнăçласа пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ, производствăллă канашлусенче сӳтсе яваççĕ.

Сталин юлташăн приказĕ рабочисене тата тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Халĕ Май уявĕ умĕнхи ăмăрту анлăн саралса кайрĕ. Мастерскойри рабочисем Федотов, Пименова, Кашкарова, Кириллова, Гришина, Тургенев юлташсем февраль уйăхĕнче нормăна 150 процент таран тултарса ĕçленĕ, март уйăхĕнче вĕсем 200 процент тултараççĕ. Хăма çуракан тата катка-пичке тăвакан заводри Исаичев, Романова, Салыгин, Гаврюшин юлташсем ĕç тухăçлăхне 30—35 процент ӳстерчĕç.

* * *

ШАХАСАН. («Чăваш Коммуни» корр.). Райпромкомбинат коллективĕ февраль уйăхĕнче планран ирттерсе икĕ хут ытларах продукци туса кăларчĕ. Пĕрремĕш квартал планне икĕ уйăх хушшинчех чылай ирттерсе тултарчĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕ комбинатри работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укça пачĕ. Çакă комбинатри рабочисемпе работницăсене малашне татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ.

Промкомбинатра халĕ май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту пуçланчĕ. Комбинат коллективĕ Май уявĕ тĕлне II-мĕш квартал планне 150 процентран кая мар тултарассишĕн кĕрешет.

Урапа-çунасем тăвакан цехри стахановецсем Осип Герасимов, Самсон Васильев, Игнатий Леонтьев юлташсем ĕç нормине 130—140 процент тултарса пыраççĕ. Çăматăсем йăвалакан Е. Александров, тир тăвакан М. Петров тата витресем тăвакан А. Константинов кашни кун нормăна 150—200 процент тултараççĕ.

Райпромкомбинат хăйĕн ĕçне уйрăмах ВКП(б) Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕ хыççăн лайăхлатса çĕнетрĕ. Промкомбинат управляющийĕ Платонов юлташ кашни кунах рабочисем патĕнче пулать. Вăл рабочисем мĕнле ĕçленине çийĕнчех тĕрĕслесе тăрать. Ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçлани çинчен пĕлтерсе кашни 10 кунта пĕрре рабочисемпе производствăллă канашлусем ирттерет. Рабочисем çав канашлусенче хăйсен ĕçĕн опычĕсемпе паллаштараççĕ.

ХУЛАРИ ПАРТАКТИВĂН ПУХĂВĔ

Мартăн 13-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ.

Парти активĕ военнослужащисен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе партипе совет организацисен ĕçне лайăхлатмалли мероприятисем çинчен ВКП(б) Горком секретарĕн Романова юлташăн докладне итлерĕ.

Докладчик тата пренире тухса каланă юлташсем çак ĕçри çитменлĕхсене хытă критиклерĕç. Фронтовиксен çемйисемшĕн тата отечественнăй вăрçă инвалидĕсемшĕн кулленех тăрăшма кирли çинчен ВКП(б) Хула комитечĕн II-мĕш пленумĕ питĕ вăхăтра сӳтсе-явнине палăртрĕç.

— ВКП(б) Горкомĕн пленумĕ пуличчен, — тет Полукаров юлташ, — фронтовиксен çемйисем пирĕн пата çӳренĕ, эпир вĕсем патне çӳремен. Халĕ эпир ĕçе урăхлатрăмăр. Эпир военнослужащисен çемйисем патне кайса, вĕсем мĕнле пурăннипе паллашрăмăр. Вĕсене куллен кирлĕ таварсем, вутă, çĕрулми тата ытти те тупса парас тĕлĕшпе мерăсем йышăнатпăр. Пирĕн мастерскойсем фронтовиксен çемйисене тумтирсем тата урана тăхăнмаллисем пĕр тӳлевсĕр çĕлесе е юсаса парас ĕçе организацилеççĕ.

Военнослужащисен çемйисене эпир пачах та çителĕксĕр пулăшса тăнă, — тет пир-авăр фабрикин директорĕ Наумова юлташ. — Горком пленумĕ хыççăн эпир, парторганизаципе пĕрле, фронтовиксен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе чылай мероприятисем туса иртертĕмĕр.

Пухура горисполкомăн тата унăн отделĕсен ĕçне критикленине Горсовет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ тĕрĕс тесе йышăнать. Военнослужащисен çемйисемшĕн Горсовет лайăхрах тăрăшма тивĕçлĕ. Фронтовиксен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе мартăн 15-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çитиччен вăхăтра иртекен вунăкунлăхра нумай ĕç тумалла пулать. Çак вăхăтра, сăмахран, 1.600 кубометр вутă турттарса тухмалла.

Брикер юлташ фронтовиксен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе пĕр заводра мĕнле ĕçлени çинчен каласа парать. Цехсенче ятарласа комиссисем тунă, бригадăсем уйăрнă, вĕсем фронтовиксен çемйисене мĕн кирлине вырăна тухса тĕрĕслеççĕ. Япаласемпе укçа-тенкĕ пухас ĕçе организацилерĕç. Фронтовиксен çемйисене пулăшма çу, сало, атă-пушмак, укçа-тенкĕ уйăрса панă.

Майковский юлташ выранти промышленноçпа хулари промартельсем куллен кирлĕ таварсене туса кăларас тĕлĕшпе çавтери нумай ĕçленине палăртрĕ, çывăх витресем, куритасем, пукансем тата ытти те сахал туса кăлараççĕ.

Финанс Халăх Комиссарĕ Золотников юлташ: фронтовиксен çемйисене совет государстви паракан льготăсене мĕнле ĕçе кĕртнине çирĕппĕн тĕрĕслесе пымалла, пенсисемпе пособисене вăхăтра памалла, тесе палăртать. ВЛКСМ Хула комитечĕн секретарĕ Охандерова юлташ комсомолецсем ку тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен каласа парать. Ленинградри комсомолецсен примерĕпе, хулари комсомолецсен йăла бригадисене организацилеççĕ, вĕсем фронтовиксен çемйисене пулăшас ĕçе активлăн хутшăнмалла.

Романова юлташ доклачĕ тăрăх çавăн пекех тата Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ Ларионов, Дмитриева, Исаков юлташсем тухса каларĕç.

Пуху вĕçĕнче ВКП(б) Обкомĕпе Горкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ тухса каларĕ. Вăл юлашки вăхăтчен фронтовиксен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе кулленех ĕçлеменнине паллă тăвать. Çавăншăн пуринчен малтан парти оганизацисем айăплă. Фондсем çукки çинче ярса, хăшпĕр предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем военнослужащисен çемйисен ыйтăвĕсене тивĕçтермесĕр тăнă. Вырăнти майсемпе усă курасси çинчен манса кайнă. Çав вăхăтрах пирĕн, уйрăмах пысăк предприятисен, ку тĕлĕшпе лайăх майсем пур. Çак ĕçе коммунистсемпе комсомолецсем, пирĕн актив хăй çине илни çеç кирлĕ. Мĕншĕн-ха, сăмахран, заводсенчи коммунистсемпе комсомолецсем канмалли кунсемпе усă курса фронтовиксен çемйисене пулăшас ĕçе организацилемеççĕ: вăл кунсенче вĕсем пукансем тума, хăйсен вăйĕпе хваттерсене юсаса пама тата ыт. те тума пултараççĕ. Ачасем валли кĕпе-йĕм çĕлес ĕçе килхуçи хĕрарăмĕсене явăçтармалла. Военнослужащисен çемйисене тӳлевсĕр пулăшас тĕлĕшпе пирĕн хăшпĕр мастерскойсем пуçарнă ĕçе анлăн сарса ямалла. Парти Горкомĕ, çывăхри районсенчи колхозсемпе çыхăнса, ялхуçалăх продукчĕсен фондне тусан та лайăх пулмалла, фронтовиксен çемйисене хăйсен пахчисенче акма вăрлăх тупса парас тĕлĕшпе те халех тăрăшас пулать. Республикăра военнослужащисен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе вунăкунлăх пулса иртет. Çак вунăкунлăхра мĕн май пуррине пурне те тăвас пулать. Анчах вунăкунлăх тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекенсен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе тумалли пысăк ĕçĕн пуçламĕшĕ кăна пулса тăрать. Ку ĕçе хуланах туса пырас пулать.

Парти активĕн пухăвĕ резолюци йышăнчĕ, коммунистсене ВКП(б) хула комитечĕн II-мĕш пленумĕ йышăннă решение хăвăртрах пурнăçлама чĕнчĕ.

МАЙКОПРИ НЕФТЕПРОМЫСЛАСЕНЕ ĔÇЕ ЯНИ

Нимĕç оккупанчĕсем аркатнă Майкопри нефтекомбината ура çине тăратасси питĕ хĕрӳллĕн пырать. «Хадыженьнефть» тресчĕ «Широкая балка» тата «Асфальтовая гора» текен вырăнсенче нефть кăларма пуçланă та ĕнтĕ. Бурильщиксем, монтажниксем, шоферсем, трактористсем тата квалификациллĕ ытти рабочисем хатĕрлекен курссенче занятисем пуçланнă. (ТАСС).

Фронтовиксен çемйисене пулăшмалли вунăкунлăх

Фронтовиксен çемйисемшĕн тăрăшни— Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнипе пулать

ВКП(б) Обкомĕ фронтовиксен çемйисене пурнăçра йăла условийĕсене тĕпрен лайăхлатас шутпа мартăн 15-мĕшĕнчен 25-мĕшне хушшинче республикăра фронтовиксен çемйисене пулăшмалли вунăкунлăх иртерме йышăннă.

Партипе совет тата профсоюз организацийĕсен вунăкунлăх вăхăтĕнче фронтовиксен мĕнпур çемйисен пурнăçпа йăла условийĕсене тĕплĕн хут тĕрĕслесе тухмалла. Вĕсем мĕнле хваттерсенче пурăннине, вĕсене атă-пушмак, тумтир, сĕтел-пукан, вутă тата çимелли продуктсем мĕн чухлĕ кирлине тĕрĕслемелле. Кунпа пĕрлех вĕсене çав япаласене çителĕклĕ таранах туянма, вутă хатĕрлесе турттарма пулăшмалла.

Вунăкунлăхра районсенчи тата хуласенчи атă-пушмак тата тумтир çĕлекен мастерскойсемпе туллин усă курмалла. Вĕсенче фронтовиксен çемйисем валли атă-пушмаксемпе тумтирсем юсамалла, çĕнĕрен çĕлтермелле.

Республикăри малта пыракан чылай колхозсем фронтовиксен çемйисене пулăшма ятарласа продовольстви фончĕ туса хунă. Çак пуçарăва малалла та анлăн сарса пымалла.

Кĕçех çураки çитет. Пĕр сехет вăхăта та усăсăр иртермесĕр, эсир эвакуаципе килнĕ çынсен çемйисене çĕрулми лартма тата пахча-çимĕç акма кирлĕ çĕр участокĕсем уйăрса памалла, вĕсене вăрлăхсем тупма, киле, выльăх-чĕрлĕх туянма пулăшмалла.

Фронтовиксен çемйисемшĕн тăрăшни — Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшниех пулать. Ку ĕçе республикăри Шупашкарпа Вăрнар районĕсенче юлашки вăхăтра чылай вăйлатни сисĕнет.

Вунăкунлăх вăхăтĕнче тата малалла вăхăтра та фронтовиксен çемйисене паракан пулăшăва татах ӳстермелле.

Партипе совет тата комсомол активĕ колхозсене кайрĕ

ЧКАЛОВСКОЕ, мартăн 15-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районра фронтовиксен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе вунăкунлăх иртерме ятарласа комисси тунă.

Вунăкунлăха ирттерме хатĕрленнĕ май, вăл комисси партипе совет тата профсоюз активĕн, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсен канашлăвне ирттерчĕ.

Паян, вунăкунлăхăн пуçламĕш кунĕнче, фронтовиксен çемйисен пурнăçпа йăла условийĕсене тĕрĕслесе палăртма тата пулăшу парассине организацилеме районри мĕнпур колхозсене партипе совет тата комсомол активне ятăмăр.

Район вунăкунлăх вăхăтĕнче фронтовиксен çемйисем валли 900 кубометр вутă хатĕрлесе турттарма шутлать. Кунсăр пуçне колхозсенче фронтовиксен çемйисем валли продовольстви фончĕ тума, эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çынсен çемйисене пахча-çимĕç лартма çĕр участокĕсем уйăрса пама, вĕсене пахча-çимĕç, çĕрулми вăрлăхĕ тупса пама палăртнă.

Фронтовиксен çемйисен пурнăçпа йăла условийĕсене тĕрĕсленĕ тата вĕсене пулăшу панă çĕре комсомолецсемпе шкул ачисене те анлăн явăçтаратпăр

Д. Кирпичев.

ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

Вăрахăн çаврăнкалаççĕ

Фронтовиксен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе ВКП(б) Обкомĕ мартăн 15-мĕшпе 25-мĕшĕ хушшинче вунăкунлăх ирттерме йышăнни çинчен Октябрьски район руководителĕсем чылай маларах пĕлнĕ. Апла пулин те ăна лайăхрах организацилесе ирттерес тĕлĕшпе вунăкунлăх пуçланичченех нимĕн те туман.

— Район вунăкунлăхра мĕнле ĕçсем туса ирттерме палăртни çинчен каласа парăр-ха, — тесе ыйтсан, Октябрьски райсовет исполком председателĕн заместителĕ Леонтьев юлташ:

— Ку ыйтăва паян парти райкомĕнче пăхса тухаççĕ-ха..., тесе ответлерĕ.

Тӳррипе каласан, унта вунăкунлăха организацилесе ирттерме «Шупашкартан Уполномоченнăй килессе кĕтсе пурăннă» иккен.

Тăвата боецăн ашшĕ

ШАХАСАН. Николай Николаевич Калинин — 56 çулта. Вăл, ватăлăха пăхмасăр, Матьшӳ селповĕн председателĕ пулса ĕçлет.

Унăн тăвата ывăл пулнă. Пĕри—1939 çулта, белофинсене хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра, паттăрла вилĕмпе вилнĕ. Кĕрешӳре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Правительство наградăланă. Тепĕр виçĕ ывăлĕ отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче çапăçаççĕ.

56 çулхи патриот хăйĕн ывăлĕсемпе тивĕçлипе мухтанать. Вĕсене вăл тылри ĕçпе пулăшса тăрать. «Пирĕн пулăшу мĕн чухлĕ пысăкрах пулĕ, тăшман çавăн чухлĕ хăвăртрах вăйран тухĕ», тет Калинин юлташ.

Матьшӳ сельповĕ иртнĕ çулăн VI-мĕш кварталĕнче тимĕр-тăмăр пухмалли плана 200 процент тултарнă. Кăçалхи пĕррелĕш квартал планне те 200 процент тултарассишĕн кĕрешет. Николай Николаевич кунсăр пуçне хăй перекетлесе усранă 1.000 тенкĕ укçана боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тунă çĕре пачĕ.

Смирнов.

Ют çĕршывсенче

Вашингтонри пресс-конференцире Иден тунă заявлени

ВАШИНГТОН, мартăн 13-мешĕ. (ТАСС). Великобританин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден пресс-конференцире çапла каланă: çĕнтеричченех пирĕн йывăр çапăçусем тумалла пулать-ха, тенĕ. Вăрçăра çĕнтеричченех пораженисем тата ăнăççăрлăхсем нумай тӳсмелле пулĕ-ха. Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусем çирĕп никĕс çинче аталанма пултарĕç, тесе шанса каланă Иден. Малалла Иден «Хĕрлĕ Çарăн тĕлĕнмелле çитĕнĕвĕсене тата вырăссен хĕл тăршшĕпе тунă çĕнтерĕвĕсене» палăртнă. Общинăсен палатинче декабрь уйăхĕнче тунă заявленине ăнлантарса пама ыйтсан (унта вăл США, Великобритани тата Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнава çирĕплетме кирли çинчен каланă) Иден çапла каланă: «Çапла пĕрлешсе ĕçлени мирĕн тивĕçлĕ тата çирĕп никĕсĕ пулса тăрать», тенĕ. Çавăн пекех тата Китайпа тата пĕрлешнĕ ытти нацисемпе пĕрлешсе ĕçлемелле. «Германипе Япония урăх нихăçан та çĕнĕрен агресси тума ан пултарччăр тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма кирлĕ». тенĕ Иден.

Вăрçă хыççăн паллăмар вăхăтлăха Германипе Италие контроль туса тăма кирлĕ тесе шутламастăн-и? тесе ыйтнине хирĕç Иден çапла каланă: «Иртнĕ вăрçă хыççăн эпир йышăннă позицие урăх йышăнма юрамасть». Германире çĕнĕ правительство туса хуни çеç çителĕксĕр, ытти мерăсем те йышăнмалла, тенĕ. Корреспондентсем Иденран çапла ыйтнă: Вашингтона халĕ вăл килни Англипе Совет Союзĕ хушшинче çирĕм çуллăха тунă договорпа çыхăнса тăмасть-и? тенĕ. Иден çапла ответленĕ: Англипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусене пĕр-пĕрин çине çирĕп шанса тăмалли никĕс çинче тума кирли çинчен эпĕ тахçанах шутланă, тенĕ. Асăннă договора алă пусни СССР-па Англи хушшинчи çыхăнусенче «историллĕ улшăну» пулса тăчĕ тесе Сталин каланине Иден паллă туса хăварнă. Малалла вăл çапла каланă: договор никĕсне Атлантика хартине тата пĕрлешӳллĕ нацисен декларацине хывнă. Вăл ĕнтĕ вăрçă хыççăн та пĕр-пĕрне шанса тăма май парать. Совет Союзĕпе Польша хушшинчи чикĕ çинчен тăракан ыйту пирки Иден нимĕн те каласшăн пулман.

Пĕрлешӳллĕ Штатсенче мĕн чухлĕ пурăнасси çинчен пĕлменнине палăртса, вăл США-ра хăйĕн ĕçне пĕтерсен тата Канадăна кайса килме шутлани çинчен пĕлтернĕ. Михайловичпе партизансем хушшинчи хирĕçӳсем çинчен ответлесе Иден çапла каланă: вăл хирĕçӳсем, пĕр енчен, Югослави государствинчи сербсем, хорватсем тата словенсем хушшинчи хирĕçӳсене палăртаççĕ, вăл ыйтăва татса парĕç, тенĕ. Финляндия вăрçăран тухасси çинчен нимĕн те пĕлместĕп, тенĕ Иден. Великобритани правительстви, тенĕ малалла Иден, Германие хирĕç кĕрешĕве пур французсем те пĕрлешчĕр тесе тăрăшать. Çавăн пек пĕрлĕх туса çитерме чылай вăхăт кирлĕ пулĕ. Англия вăрçă хыççăн «çирĕп Франция» пултăр тесе тăрăшать, тенĕ. Хăй мĕн ĕçпе килни çинчен пĕлтерсе Иден çапла каланă: пĕлтерӳре каланă пек, вăл килнин тĕллевĕ «вăрçă положенийĕн пур енĕсем çинчен те сӳтсе-явасси» пулать. Иден хăй тĕрлĕ çынсемпе тĕл пулса калаçма шутлани çинчен тата Америка армийĕпе флочĕн, чăçĕсене, çар предприятийĕсене кайса пăхма шутлани çинчен пĕлтернĕ.

Вăрçă хыççăнхи авиаци ыйтăвĕсене сӳтсе-явма шутлать-и? тесе ыйтни çине ответлесе Иден çапла каланă: ку ыйтăва сывлăшри çыхăнусемпе тĕрлĕ нацисене çирĕпрех пĕрлештермелли майсем туса хурас енчен пăхма кирлине палăртса, ку ыйтăва тивĕçлипе татса пама пулĕ, тенĕ вăл. Германири шалти событисене хаклама йывăр, анчах Германия вăрçăран тухассинчен аякра-ха, тесе каланă Иден. Вăрçă хыççăнхи Итали çинчен ыйту хускатса, Иден çакна палăртнă: нумай вăхăт хушшинче Итали енчен хăрушлăх пулма пултараймĕ тесе шутлатăп эпĕ, тенĕ вăл. Малалла Иден çапла каланă: эпĕ США-на союзниксем хăйсен вăйне туйма пуçланă вăхăтра, вăл вăя тăшмансем те туйма пуçланă вăхăтра килсе çитрĕм, тенĕ. Çакăн пек лозунг кăларса тăратма тивĕçлĕ: «Ĕçлессишĕн малалла! Пире йывăр ĕç кĕтет, анчах пĕрлешӳллĕ нацисем ăна пĕрле ĕçлесе татса парĕç».

США-н ФИНЛЯНДИРИ ПОСЛАННИКĔ ÇИНЧЕН УЭЛЛЕС ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

ВАШИНГТОН, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Америка посланникĕ Шенфельд Хельсинкине таврăнать-и тесе пичет представителĕсем ыйтни çине ответ парса, государственнăй секретарь ĕçĕсене туса пыракан Уэллес çапла каланă: хальхи вăхăтра Шенфельд Финляндие таврăнасси пирки ниепле план та çук-ха, тенĕ. Финляндири лару-тăру çинчен Уэллес нимĕн те каласшăн пулман.

Финляндирен США-на Шенфельд январĕн 6-мĕшĕнче таврăннă. Январĕн 24-мĕшĕнче, пичет представителĕсем ыйтни çине ответлесе государственнăй секретарь Хэлл çапла каланă: Шенфельд Финляндие таврăнать пулмалла, тенĕ.

КРИТ ÇИНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: тĕнĕл держависен оккупациллĕ войскисем Крит утравĕн тинĕс хĕрринчи районĕсене çеç контрольлесе тăраççĕ. Критăн шалти районĕсем пурте тата кăнтăр çыранĕн хăшпĕр пункчĕсем те грек патриочĕсен аллинче тăраççĕ.

Пĕлтерӳсем

Мартăн 16-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре ВКП(б) Горкомĕн Парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) агитаторсемпе пропагандистсем валли лекци пулать. Лекци теми: **«Карл Маркс — пролетариат çулпуçĕ тата научнăй коммунизмăн никĕсне хывакан»** (К. Маркс вилни 60 çул тултарнă тĕле).

Лекцие **В. А. Карпушин** юлташ вулать.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Мартăн 17-мĕшĕнче Париж Коммуни тата МОПР кунĕ ячĕпе Шупашкар хулинчи тата гарнизонĕнчи МОПР активĕн пухăвĕ пулать.

Кун йĕрки:

1. Париж Коммуни 72 çул тултарнипе МОПР кунĕ çинчен доклад.
2. Художествăллă пай.

Пуху каçхине 8 сехетре Хĕрлĕ Çар çуртĕнче уçăлать. МОПР ячейкисен секретарĕсен чĕнӳ билечĕсене МОПР Горкомĕнче (Ленинград урамĕ, 20) илмелле.

МОПР Обкомĕпе Горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Çĕнĕ çĕре куçарасси— государствăн пысăк ĕçĕ

Кăçалхи çул ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх колхоз хуçалăхĕсене Инçетри Хĕвелтухăçне: Камчаткăна, Бурят-Монголие тата Иркутск облаçне пулă тытас тĕлĕшпе ĕçлекен колхозсене тата пулă промышленноçĕн предприятийĕсене куçараççĕ. Инçетри Хĕвелтухăçĕн пуянлăхĕсене алла илесси партипе правительствăн ĕçĕнче яланах пысăк вырăнта тăнă.

Партин XVIII-мĕш съездĕнче В. Молотов юлташ çапла каланă: Инçетри Хĕвелтухăçне тĕслĕхрен илсе пăхсан, уйрăмах çакă курăнать: çĕршывăн экономика тĕлĕшĕнчи тĕп вучахĕсене пĕтĕмĕшпе аталантармасăр государствăн питех те кирлĕ интересĕсене тивĕçтерме çук.

Инçетри Хĕвелтухăçĕнче топливо енĕпе, çавăн пекех тата май килнĕ таран металсемпе машиностроени енĕпе, цементпа вăрман енĕпе, пĕр сăмахпа каласан, строительствăра кирлĕ материалсем енĕпе, апат-çимĕçпе çăмăл промышленность продукцине турттарас тĕлĕшри пысăк ĕçсем енĕпе мĕн кирли пурте пулма тивĕçлĕ. Инçетри Хĕвелтухăç крайĕ çине эпир совет влаçĕн Хĕвелтухăçĕнчи малалла çирĕплетме тивĕçлĕ хăватлă форпосчĕ çине пăхнă пек пăхатпăр», тенĕ.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ партин XVIII-мĕш съезчĕ Камчатка, Охотск районĕсене хăвăртрах алла илме, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи хуçалăхăн отраслĕсене пурне те анлăн аталантарса пыма палăртса хучĕ.

Парти чĕннипе пиншер рабочисемпе колхозниксем, специалистсемпе служащисем Инçетри Хĕвелтухăçне пурăнма тата ĕçлеме, çав тĕлĕнмелле чаплă крайăн вĕçĕ-хĕррисĕр пуянлăхĕсене алла илме каяççĕ. Инçетри Хĕвелтухăçĕнче халăх хуçалăхĕпе культурăна хăвăртрах малалла аталантарас тесен, çынсене çĕнĕ çĕре куçарассине большевикла организацилени кирлĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ партин XVIII-мĕш съездĕнче Молотов юлташ: Инçетри Хĕвелтухăçне çĕнĕ çĕре куçарса каясси — государствăн пысăк задачи пулса тăрать, тесе каланă.

Партин XVIII-мĕш съезчĕ хăйĕн решенийĕсенче Инçетри Хĕвелтухăç бассейнĕнче пулă тытас ĕçе вăйлатма кирлине кăтартса хăварчĕ. Çав вырăнсенчи пулă промышленноçне аталантарса пыма чĕртавар тĕлĕшпе çавтери пуян майсем пур.

Кăçалхи çул колхозниксене пулă промышленноçĕнче ĕçлеме куçараççĕ. Пулă тытас ĕçе май килнĕ таранах ӳстермелле, тăван çĕршыва пиншер те çĕршер пин центнер паха пулă, миллионшар банка консерва, çĕршер центнер кета пулă памалла. Геройла Хĕрлĕ Çарăн воинĕсене, фронт валли хĕçпăшалсемпе боеприпассем хатĕрлекен фабрикăсемпе заводсенчи рабочисене паха апат-çимĕç ытларах памалла.

Чăваш республикинчен Камчаткăна, Бурят-Монголине тата Иркутск облаçне çĕнĕ çĕре куçараççĕ. Пирĕн республика Инçетри Хĕвелтухăçĕн пулă пуянлăхĕсене алла илме, пулă промыслипе промышленноçне хутшăнма хавхаланса тăракан çĕршер çынсене пама пултарать.

Çĕн çĕре каякансене суйласа илес ĕçе районри организацисен халех тытăнмалла. Çак ыйту тавра массăллă-ăнлантарулла ĕçе анлăн сармалла. Тăван çĕршывăн пысăк пуянлăхĕсене алла илме, çав инçетри кĕтессене культурăллă сăн-сăпат кӳрме çĕнĕ çĕре каясси колхозниксен хăйсен ирĕклĕ кăмăлĕпе пулса пыма тивĕçлĕ.

Çĕнĕ çĕре каякансене правительство пысăк льготăсем тата нумай тĕрлĕ пулăшу парать. Поезд çинче тӳлемесĕр кайма ирĕк парать тата çул çинче тӳлемесĕр апат-çимĕç парса тăрать. Çĕнĕ çĕре çитсе вырнаççан лайăх çурт-йĕрсем парать, культура тĕлĕшĕнчен пулăшса тăрать. Государствăна тĕрлĕ сборсемпе налогсем тӳлессинчен Камчаткăра 10 çуллăха, Бурят-Монголире—6 çуллăха, Иркутск облаçĕнче — 3 çуллăха хăтараççĕ. Çавăн пек льготăсем панине пула тата куçса кайнă çынсем тӳрĕ кăмăлпа ĕçленине пула, куçса кайнă нумай çынсем çĕнĕ вырăнсенче культурăллă та пуян пурăнма тытăнчĕç. Вĕсенчен нумайĕшĕсем хăйсен кунти тăванĕсем патне çырусем çыраççĕ, хăйсем патне ĕçлеме куçса пыма, инçе çула хăрамасăр тухма чĕнеççĕ.

Колхозниксене çĕнĕ çĕре куçарса каяс ĕç вырăнти организацисенчен ăнлантарулла ĕçе тимлĕн туса пыма ыйтать. Çĕнĕ çĕре куçарса кайни— государствăн питех те паха ĕçĕ пулса тăни çинчен çынсене тĕплĕн ăнлантарса пынинчен çак пысăк задачăн ăнăçлăхĕ килет.

Иккĕленмелли çук, пирĕн умма партипе правительство лартнă задачăна эпир пурнăçа кĕртĕпĕр. Чăваш республикинчи пиншер колхозниксем, çак ĕç мĕнле пысăк вырăн йышăнса тănине ăнланса илсе, Инçетри Хĕвелтухăçне кăмăлласах куçса кайĕç, çĕнĕ çĕрти рабочисен йышне çĕнĕ çынсем хушса парĕç.

И. ВОРОБЬЕВ.

РСФСР Совнаркомĕн инспекторĕ.

ТĂРĂШСА ĔÇЛЕТĔП

Чи маттур çынсем ирсĕр тăшманпа çапăçма фронта кайрĕç. Колхоз хирĕсемпе фермисенче халь пирĕн хĕрарăмсемпе хĕрсен ĕçĕ вĕресе тăмалла. Колхоз производствинчи ĕçе куллен фронтра çапăçакан тантăш-юлташсен хастарлăхĕпе туса пымалла. Пирĕн колхозри хĕрачасемпе хĕрарăмсем çавăн пек ĕçлеççĕ те. Пур ĕçе те вăхăтра туса пыратпăр, тырпулăн тухăçлăхне те, выльăх-чĕрлĕхĕн хисепĕпе тухăçлăхне те çулран çул ӳстерсе пыратпăр.

Сталин юлташăн 1941 çулта майăн 1-мĕшĕнче каланă историллĕ сăмахĕсене эпир манмастпăр. Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ ун чухне колхозниксемпе колхозницăсене фронтпа çĕршыва нумайрах тырпул, аш-какай туса парассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме чĕнчĕ. Сталин юлташ чĕнни çине эпĕ ĕçре ответлерĕм тата халĕ те хамăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлетĕп.

Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Сормово» колхозăн сысна ферминче эпĕ кăçалхипе пиллĕкмĕш çул ĕçлетĕп. Сыснасене пăхса çитĕнтерес ĕçе вĕренсе çитрĕм. Тăрăшса тунă ĕçĕн результачĕ те пысăк пулнине куçкĕретĕн куртăм. 1941 çулта эпĕ 7 ама сыснаран 118 çура илтĕм. Вĕсене пурне те лайăх пăхса ӳстертĕм. Сыснасен тухăçлăхне хăпартнăшăн тата çурăсене лайăх пăхса ӳстернĕшĕн 1941 çулта мана ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх 10 сысна çури пачĕç.

1942 çулта çав амасенчен эпĕ 111 çура илтĕм. Вĕсене пурне те лайăх пăхса патăм.

З. Порфирьева.

ЗАВОДА ÇАКĂН ПЕК ĔÇЛЕКЕНСЕМ КИРЛĔ:

Метала сивĕлле ĕçлекен инженер-технологсем тата техник-технологсем, экономистсем, снабжени тата склад работникĕсем, табельщицăсем, нарядчицăсем тата секретарь-машинистка.

Çакăн пек квалификациллĕ рабочисем кирлĕ: токарьсем, револьверщиксем, фрезеровщиксем, строгальщиксем, шлифовальщиксем, автоматчиксем, волочильщиксем, термистсем, газогенераторщиксем, литейщиксем, сварщиксем, молотобоецсем, штамповщицăсем, прессовщиксем, модельщиксем, электромонтерсем, слаботочниксем, телефонисткăсем, браковщиксем, ещĕк тăвакансем, упаковщиксем, слесарь-инструментальщиксем, ремонт тăвакан слесарьсем, автослесарьсем, шоферсем, металл касакансем, жестянщиксем, шорник-смазчиксем, малярсем, плотниксем, каменщиксем, штукатурсем, печниксем, кровельщиксем, истопниксем, дворниксем, подсобнăй рабочисем, уборщицăсем, прачкăсем, курьерсем, сторожсем, возчиксемпе грузчиксем (кусене общежити параççĕ).

Васкавлă ассенизаторсем кирлĕ (ĕç укçине килĕшнĕ тăрăх тӳлеççĕ тата общежити параççĕ).

Завода 14 çула çитнĕ ачасене ученик шучĕпе вĕренме илеççĕ. Вĕреннĕ хушăра учениксене 150—200 тенкĕ тӳлесе тăраççĕ, рабочисен норми тăрăх снабжени пулать.

Вахтерсем тата пожарнăй охранниксем кирлĕ (арçынсем те, хĕрарăмсем те кĕме пултараççĕ). Вĕсене общежити параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, К. Маркс урамĕ, 80, пропуск бюровĕ. 11 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 3 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

3—2

„Металлист" артеле çакăн пек рабочисем кирлĕ: литейщиксем, тимĕрçĕсем, молотобоецсем, жестянщиксем, модельщиксем, сехет мастерĕсем тата çав специальноçсене вĕренекен учениксем.

Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Кировски поселок, Граждански урам, 3. Тел. 2—45 (икĕ звонок).

Центроэлектромонтажăн 6-мĕш участокне бухгалтер кирлĕ. Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Ленин урамĕ, 11. Телефон 2—71.

2—2.

Çул тăвакан уйрăм машинăсемпе ĕçлеме тата трактористсен курсне вĕренме илеççĕ. Занятисем апрелĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ, вĕренесе пĕр уйăх таран вĕренмелле.

16 çултан кая мар çитĕннисене тата 4 çултан кая мар вĕреннисене илеççĕ. Вĕренекенсене уйăхне 150 тенкĕ стипенди, общежити параççĕ тата столовăй пулать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Калинин урамĕ, 51, кадрсен пайĕ, 9 сехетрен пуçласа 18 сехетчен пĕлме пулать.

Çавантах тата старши экономист, главнăй бухгалтерсем тата бухгалтер-ревизорсем кирлĕ.

2—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

ЧТ 661 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.